27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАЙ
10
ЮНКУН
92(6587) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ВАСИЛЕВСКИЕ Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, авиаци тата артиллери пыра-пыра çапса пулăшнипе, виçĕ кун хушши наступлени туса пырса çапăçнă хыççăн нимĕçсен нумай вăхăтлăха вăйлăн тĕреклетнĕ, тимĕрпе бетонран тунă оборонăллă сооруженийĕсен виçĕ тăрăхран тăракан оборонине татса кĕнĕ те темиçе сехет каярах Хура тинĕс çинчи питех те паха тинĕс çар базине тата крепоçа — СЕВАСТОПОЛЬ хулине штурмласа туртса илнĕ.

Çапла вара, нимĕçсен Крымра хирĕç тăмалли юлашки тĕревне пĕтерсе, Крыма фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕм ĕшпех тасатса çитернĕ.

СЕВАСТОПОЛЕ туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ЗАХАРОВ генерал-лейтенантăн, КРЕЙЗЕР генерал-лейтенантăн, МЕЛЬНИК генерал-лейтенантăн, ЧАНЧИБАДЗЕ генерал-лейтенантăн, КОЛОМИЕЦ генерал-лейтенантăн, ЛОВЯГИН генерал-майорăн, МИССАН генерал-лейтенантăн, НЕВЕРОВ генерал-майорăн, КОШЕВОЙ генерал-майорăн, ПРОВАЛОВ генерал-майорăн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-майорăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КРАСНОПЕВЦЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн СТРЕЛЬБИЦКИН, артиллери генерал-майорĕн ТЕЛЕГИНĂН, артиллери генерал-майорĕн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорĕн ТВЕРЕЦКИН, КОБЗЕВ полковникăн, ФРОЛОВ полковникăн артиллерисчĕсем; ПОЦЕЛУЕВ полковникăн, БАРАБАШ полковникăн, ЖИДКОВ полковникăн танкисчĕсем; Авиаци Маршалĕн ГОЛОВАНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ХРЮКИНĂН, авиаци генерал-майорĕн САВИЦКИН, авиаци генерал-майорĕн ФИЛИНĂН, авиаци генрал-лейтенанчĕн ЕРМАЧЕНКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ФЕДОРОВĂН, авиаци генерал-майорĕн РУБАНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн КУЗНЕЦОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТУПИКОВĂН, авиаци генрал-лейтенанчĕн ЛОГИНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ВОЛКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн СЧЕТЧИКОВĂН, ПРУТКОВ полковникăн, ГЕТЬМАН полковникăн, ЧУЧЧЕВ полковникăн, ГЕЙБО полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, КОНАРЕВ подполковникăн, КОРЗУНОВ полковникăн, МАНЖОСОВ подполковникăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ подполковникăн, ЛЮБИМОВ подполковникăн летчикĕсем; ОКТЯБРЬСКИЙ адмиралăн, БОЛТУНОВ контрадмиралăн, 1-мĕш рангри капитанăн ФИЛИППОВĂН, 1-мĕш рангри капитанăн СОЛОВЬЕВĂН, 2-мĕш рангри капитанăн ПРОЦЕНКОН, 2-мĕш рангри капитанăн ДЬЯЧЕНКОН морякĕсем; инженерла çарсен генерал-майорăн КОЛЕСНИКОВĂН, ПАВЛОВ полковникăн, КОРЯКИН полковникăн саперĕсем тата çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас шутпа, СЕВАСТОПОЛЕ ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсĕсене «СЕВАСТОПОЛЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, майăн 10-мĕшĕнче, 1 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăвата тупăран çирĕм тăвата хут пĕр харăс персе, СЕВАСТОПОЛЬ хулине йышăннă УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, СЕВАСТОПОЛЕ ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыхăма пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи майăн 10-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» хаçатăн 85-мĕш номерĕнче).

ВĂРНАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ,

6. Алексей Александрович **Ваганина** — Ленин ячĕпе тăракан колхоз председательне.

7. Петр Варламович **Варламова** — Чапаев ячĕпе тăракан колхозри колхозника.

8. Виктор Николаевич **Багрова** — ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.

9. Мария Васильевна **Васильевăна** — «11 лет Чувашии» колхозри уйĕç бригадин бригадирне.

10. Яков Васильевич **Васильева** — Уравăшри «1-ое мая» колхоз председательне.

11. Анна Викторовна **Викторовăна** — «Гигант» колхозри фермăсен заведующине.

12. Ефим Никифорович **Волкова** — районри хаçатăн редакторне.

13. Алексей Гаврилович **Гаврилова** — «Волга» колхозăн бригадирне.

14. Евдокия Николаевна **Гусихинăна** — Алманчăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри дояркăна.

15. Парасковья Денисовна **Денисовăна** — Крупская ячĕпе тăракан колхозри дояркăна.

16. Елена Сергеевна **Ерлаковăна** — Сталин ячĕпе тăракан колхозри агронома.

17. Егор Андрианович **Зайцева** — «Победа» колхоз председательне.

18. Анна Захаровна **Захаровăна** — «Первое мая» колхозри фермăсен заведующине.

19. Данил Иванович **Иванова** — Каганович ячĕпе тăракан колхозри колхозника.

20. Михаил Иванович **Иванова** — «Волга» колхозăн председательне.

21. Николай Иванович **Иванова** — ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.

22. Самуил Андреевич **Игорева** — СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Вăрнар районĕнчи уполномоченнăйне.

23. Таисия Ильинична **Ильинана** — машинно-тракторнăй станцинчи старши трактористкăна.

24. Мария Васильевна **Илюкинăна** — райçĕрĕç пайĕн махорка туса илес енĕпе ĕçлекен агрономне.

25. Егор Кириллович **Кириллова** — тракторсен бригадин бригадирне.

26. Афанасий Павлович **Козлова** — «Самолет» колхозри конюха.

27. Марина Осиповна **Кесяевăна** — «Красный Сеčан» колхозри свинаркăна.

28. Александр Сергеевич **Кровякова** — районри прокурора.

29. Иустиния Михайловна **Кузнецовăна** — «Победа» колхозăн агрономне.

30. Ксения Ивановна **Кузьминăна** — «Победа» колхозри сурăх пăхакана.

31. Надежда Матвеевна **Кузьминана** — Хурăнсурти Чапаев ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

32. Степан Кузьмич **Кузьмина** — «Победа» колхозăн уйĕç бригадин бригадирне.

33. Петр Викторович **Куракова** — «Победа» колхозăн уйхир бригадирне.

34. Ксения Лукинична **Лукинана** — «Лантăш» колхозри конюха.

35. Илья Максимович **Максимова** — Çĕн Алтăш колхозри колхознике.

36. Михаил Максимович **Максимова** — райçĕрĕç пайĕн заведующине.

37. Андрей Максимович **Максимова** — Каганович ячĕпе тăракан колхоз председательне.

38. Валентин Михайлович **Миронова** — Сталин ячĕпе тăракан колхозри уйхир бригадирне.

39. Григорий Изосимович **Мишакова** — машинно-тракторнăй станцири трактор бригадин бригадирне.

40. Анна Николаевна **Николаевана** — «Самолет» колхозри 2-мĕш бригадăн бригадирне.

41. Федор Семенович **Никонова** — машинно-тракторнăй станцин директорне.

42. Матвей Васильевич **Олангаева** — ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующине.

43. Антонина Николаевна **Павловăна** — «Волонтер» колхозри фермăсен заведующине.

44. Степанида Павловна **Павловăна** — «Волга» колхозри колхозницăна.

45. Ксения Спиридоновна **Петровăна** — «1-ое мая» колхозри колхозницăна.

46. Николай Петрович **Петрова** — «Самолет» колхозăн председательне.

47. Христина Петровна **Петровăна** — «Память Ленина» колхозри трактор бригадин бригадирне

48. Василий Петрович **Петрова** — Кӳстимĕрти Крупская ячĕпе тăракан колхозри фермăсен заведующине

49. Семен Герасимович **Рускова** — Кӳстимĕрти Крупская ячĕпе тăракан колхоз председательне.

(Малалли пулать).

Халăх панă укçа-тенкĕ хамăрăн тăван çĕршывăн вăрçăри хăватне вăйлатать, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерес сехете çывхартать. Ялсенче сарнă заем укçине хăвăртрах пухса çитерĕр!

Республикăра заем сарасси мĕнле пырать

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне республикăра майăн 10-мĕшĕ тĕлне 181.750 пин тенкĕлĕх, урăхла каласан бюджетпа вырăнаçтарма палăртнинчен 8 миллион тенкĕ ытларах сарнă. Заем укçине 89.864 пин тенкĕ пухнă.

Рабочисемпе служащисем хушшинче заем сарас тĕлĕшпе хăшпĕр районсем халĕ те кая юлса пыраççĕ. Çапла, бюджетпа вырăнаçтарма палăртнине Йĕпреç районĕнче 64,6 процент, Советски районра 82,9 процент, Шупашкар районĕнче 82,5 процент, Калинински тата Комсомольски районсенче 85-шер процент, Улатăр хулинче 82,6 процент çеç тултарнă.

Ялсенче сарнă заем укçине пухасси сӳрĕн пырать. Заем укçине Октябрьски, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри тата Красноармейски районĕсем кăна пĕтĕмпех пухса çитернĕ. Заем укçине пухас тĕлĕшпе уйрăмах Йĕпреç, Кувакино, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Советски, Хĕрлĕ Чутай, Канаш районĕсем юлса пыраççĕ.

Тăван çĕршывăн хăватне вăйлатма

Кашни колхозник 2.000 тенкĕрен кая мар çыраннă

МУРКАШ, майăн 9-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ халĕ колхозниксемпе колхозницăсем. Вĕсем мухтавлă Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пур майсемпе те пулăшма яланах хатĕррине кăтартса параççĕ.

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемĕ тухсанах «Красная Чувашия» колхоз членĕсем заема 69.000 тенкĕлĕх çыранса илсе, укçине çийĕнчех хывнă.

Малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсем çĕнĕ заема нумай пиншер тенкĕлĕх туяннă. «Красный Октябрь» колхоз председателĕ Сталев юлташ 15.000 тенкĕлĕх, «Авангард» колхозри 62 çулхи колхозник С. Кириллов юлташ 20.000 тенкĕлĕх, Буденный ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем К. Алексеев, Н. Тихонова, Т. Ананьева юлташсем 8.000-шер тенкĕлĕх туяннă.

Заем сарасси уйрăмăнах Ярапайкасси ялсоветĕнчи колхозсенче пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Унта кашни ĕçлеме пултаракан колхозник çĕнĕ заема 2.000 тенкĕрен кая мар çыранса илнĕ.

Колхоз патриочĕсен ырă ĕçĕ

Вăл кун Калинино районĕнчи «Чăваш Коммуни» колхоз колхозникĕсем мĕн ирхенех уйра ĕçлерĕç. Хĕвел каç еннелле сулăнсан, пурте уйри итем çине пухăнма тытăнчĕç.

Колхозниксем пухăнса çитсенех колхоз председателĕ И. К. Капитонов юлташ митинга уçрĕ.

— Паян Совет правительстви çĕнĕ заем кăларни çинчен пĕлтерчĕ, — терĕ вăл. — Çĕнĕ заем пирĕн таса та çутă ĕмĕтсене пурнăçа кĕртме — фашистла ирсĕрсене çĕмĕрсе тăкас сехете çывхартма пулăшать. Çавăнпа ăна кашни колхозник хаваслăн çыранса илĕ. Эпĕ çĕнĕ заема 35.000 тенкĕлĕх çыранса укçине те халех тӳлетĕп. Колхозник юлташсем, çĕнĕ заема çыранса, çĕршыв хăватне вăйлатар!—çапла чĕнчĕ патриот.

Колхозниксемпе колхозницăсем пĕрин хыççăн тепри хăйсем çĕнĕ заема мĕн чухлĕ çыранасси çинчен пĕлтерме пуçларĕç.

— Эпĕ 5.000 тенкĕлĕх çыранатăп, — тет колхозница Н. Егорова юлташ.

— Мана та 5.000 тенкĕлĕх çырăр...

Çĕнĕ заема 5.000-шер тенкĕлĕх çыранакансен йышĕ часах 9 çынна çитрĕ. 3—4-шар пин тенкĕлĕх çыранакансем унтан та ытларах пулчĕç.

Колхозниксем çĕнĕ заема 250.000 тенкĕлĕх çыранса илнĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майăн 9-мĕшĕ. (**Телефонпа**). «Трактор» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 74.200 тенкĕлĕх çыранса укçине çийĕнчех тӳленĕ. Колхоз председателĕ Иванова юлташ иртнĕ çулта Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне 8.000 тенкĕлĕх çыраннă пулсан, кăçал 13.000 тенкĕлĕх, çыраннă, укçине тӳленĕ. Ăна кура кладовщик А. Николаев 10.000 тенкĕлĕх, уйхир бригадирĕ В. Демидов 4.000 тенкĕлĕх, Е. Павлова 5.000 тенкĕлĕх, рядовой колхозник П. Яковлев 8.000 тенкĕлĕх, ферма заведующийĕ А. Николаева 10.000 тенкĕлĕх çыранса, облигацийĕсене алла илчĕç.

Колхоз председателĕ Иванова юлташ заем çыраннă чухне çапла каларĕ:

— Сталин юлташăн приказĕ пире тата та лайăхрах ĕçлеме вăй-хăват парĕ. Пирен умра нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатас задача тăрать. Çĕнтерӳ кунне çывăхартас тесе, пурте пĕр кăмăллă пухса Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшар, — терĕ.

С. ШАДИН.

Совет çарĕсем Чехословаки территорине кĕрсе кайсан Совет Главнокомандующийĕпе Чехословаки Администрацийĕ хушшинче çыхăнусем мĕнле пулмалли çинчен ССР Союзĕн Правительствипе Чехословаки Республикин Правительстви тунă килĕшĕве алă пусни

1944 çулхи майăн 8-мĕшĕнче Лондонра «Совет çарĕсем Чехословаки территорине кĕрсе кайсан Совет Главнокомандующийĕпе Чехословаки Администрацийĕ хушшинче çыхăнусем мĕнле пулмалли çинчен тунă килĕшĕве алă пуснă.

Çав килĕшĕве СССР Правительстви хушнипе Совет Союзĕн Чехословаки Республикин Правительстви çумĕнчи Посолĕ В. З. Лебедев алă пуснă, Чехословаки Республикин Правительстви хушнипе — Чехословаки Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн ĕçĕсене тăваканĕ Государственнăй Министр Г. Рипка господин алă пуснă.

Çав килĕшĕвĕн текстне аяларах пичетлетпĕр.

Совет çарĕсем Чехословаки территорине кĕрсе кайсан Совет Главнокомандующийĕпе Чехословаки Администрацийĕ хушшинче çыхăнусем мĕнле пулмалли çинчен тунă

К И Л Ĕ Ш Ӳ

Совет çарĕсем Чехословаки территорине кĕрсе кайсан Совет Главнокомандующийĕпе Чехословаки Администрацийĕ хушшинчи çыхăнусене çав икĕ çĕршыв хушшинчи туслăхпа союз йĕркипе татса парас тесе, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Чехословаки Республикин Правительстви пĕр-пĕринпе çакăн пирки каласса татăлнă:

1. Вăрçă ĕçĕсене тунă май совет (союзниксен) çарĕсем Чехословаки территорине кĕрсе кайсан, вăрçă ĕçĕсем пыракан зонăра чи аслă власть тата вăрçă ĕçĕсенчи ответлăх çав ĕçсене пурнăçлама кирлĕ сроклăха совет (союзниксен) çарĕсен Главнокомандующийĕн аллинче пулаççĕ.

2. Ирĕке кăларнă территорире ĕçлеме Чехословаки Правительствин Уполномоченнăйĕ пулать, унăн обязанноçĕсем çаксем пулаççĕ:

А) Тăшмантан тасатнă территорире администраци тăвасси тата ăна Чехословаки законĕсем тăрăх ертсе пырасси;

Б) Чехословакин çар вăйĕсене çĕнĕрен йĕркелесе ярасси;

В) Чехословаки Администрацийĕ Совет (союзниксен) Главнокомандующине активлăн пулăшса тăмалла тăвасси, тĕллесе кăтартсан: вырăнти влаçсене Совет (союзниксен) Главнокомандующине кирлĕ пек кăтартусем парса тăрасси,

3. Совет (союзниксен) çарĕсем Чехословаки территорине кĕрсе кайнă вăхăтра çав çарсенче пулнă чехословаксен çар чаçĕсем çийĕнчех Чехословаки территорийĕнче ĕçлеме тытăнаççĕ.

4. Совет (союзниксен) Главнокомандующийĕпе Чехословаки Правительствин Уполномоченнăйĕ пĕр-пĕринпе çыхăнма пултарччăр тесе Совет (союзниксен) Главнокомандующийĕ çумĕнче Чехословакин çар миссийĕ пулать.

5. Совет (союзниксен) Главнокомандующийĕн аллинче тăракан зонăсенче Чехословакин правительство органĕсем Совет (союзниксен) Главнокомандующийĕпе Чехословаки Правительствин Уполномоченнăйĕ урлă çыхăнса тăраççĕ.

6. Ирĕке кăларнă территорин пĕр-пĕр пайĕ вăрçă ĕçĕсем пыракан зона пулса тăма пăрахсанах Чехословаки Правительстви унта общество ĕçĕсене ертсе пырас влаçа пĕтĕмпех хăйĕн аллине илет, хăйĕн граждан тата çар органĕсем урлă Совет (союзниксен) Главнокомандующине пур майсемпе те пулăшать.

7. Чехословаки территорийĕнче совет (союзниксен) çарĕсен мĕнпур çыннисем Совет (союзниксен) Главнокомандующийĕн законĕсене пăхăнса тăраççĕ. Чехословакин çар вăйĕсенче тăракан мĕнпур çынсем Чехословаки законĕсене пăхăнса тăраççĕ. Чехословаки территорийĕнчи халăх та Чехословаки законĕсенех пăхăнса тăрать, вăл Совет (союзниксен) çарĕсене хирĕç преступленисем тунă пулсан та çав законсенех пăхăнса тăрать, çапăçусем пыракан зонăра тунă преступленисене çеç Совет (союзниксен) Главнокомандующийĕн законĕсем тăрăх пăхаççĕ. Тавлашу тухсан, ыйтăва Совет (союзниксен) Главнокомандующийĕпе Чехословаки Правительствин Уполномоченнăйĕ пĕрле килĕштерсе татса параççĕ.

8. Совет (союзниксен) çарĕсем Чехословаки территорине кĕрсе кайнипе çыхăнса тăракан финанс ыйтăвĕсем пирки хăйне уйрăм килĕшӳ пулать.

9. Çак килĕшӳ ăна алă пуснă хыççăнах законлă пулса тăрать. Çак килĕшĕве икĕ экземпляр çырнă, кашни экземплярне вырăс тата чехословак чĕлхипе çырнă. Икĕ текстĕ те пĕр пекех законлă пулса тăраççĕ.

Лондон, 1944 çулхи майăн 8-мĕшĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви Хушнипе
Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Чехословаки Республикин Правительстви çумĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ
В. ЛЕБЕДЕВ.

Чехословаки Республикин Правительстви Хушнипе
Чехословаки Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн ĕçĕсене тăваканĕ Государственнăй Министр
Г. РИПКА

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

КРЫМРА пирĕн çарсем, авиаци йышлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе тата артиллери хăватлăн персе тăнипе, ĕнер, майăн 7-мĕшĕнче, СЕВАСТОПОЛЕ хӳтĕлекен фашистла нимĕç çарĕсем йышăнса тăракан вăйлă çирĕплетнĕ позицисене штурмлама тытăннă. Икĕ кун хушши хаяр çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та СЕВАСТОПОЛЬ патĕнче тимĕрпе бетонран туса тултарнă сооруженисем лартса çирĕплетнĕ районăн тĕп тăрăхне пĕтĕм талкăшпех татнă. Пирĕн çарсем, 6 километра çити малалла куçса, тăшманăн СЕВАСТОПОЛЬне тата оборонăн хăватлă узелĕсене районне хӳтĕлесе тăракан çӳллĕ вырăнсене туртса илнĕ. Вĕсен шутĕнче — ЛЮБИМОВКА, МЕКЕНЗИЕВЫ ГОРЫ ятлă чугун çул станцийĕ, ВОСТОЧНЫЙ ИНКЕРМАНСКИ маяк, ХĔВЕЛАНĂÇ ИНКЕРМАН МАЯКĔ, САХАРНАЯ ГОЛОВКА ТĂВĔ, ГАЙТАНИ, ИНКЕРМАН, САПУН-ГОРА, «БОЛЬШЕВИК» колхоз, 10-мĕш номер совхоз, КАРАНЬ, КАЯБАШ тăвĕ. Халĕ тăшманпа хула çывăхĕнчи чи çывăх вырăнсенче çапăçаççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 52 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 41 самолетне персе ӳкернĕ тата, унсăр пуçне, аэродромсенче 15 самолет пĕтерсе тăкнă

☆ ☆ ☆

ХУРА ТИНĔС ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔ ТĂШМАН СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Майăн 6-мĕшĕнче кăнтăрла пирĕн сывлăшри разведка **Севастопольтен** хĕвеланăçнерехре тинĕсре тăшман транспортне асăрханă, ăна вăрçă карапĕсем сыхласа пынă. Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ тăшман конвойне темиçе хутчен умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапнă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе тăшманăн пĕтĕмĕшпе 10.000 тоннăна çити таякан 4 транспорчĕ, хуралта çӳрекен катерĕ тата 7 хăвăрт çӳрекен десант баржи шыва путнă. Тăшманăн ытти суднисене самаях вăйлă сиенленĕ.

* * *

Крымра пирĕн çарсем майăн 7-мĕшĕнче Севастополь патĕнчи çирĕплетнĕ районра штурмлама тытăннă. Ирхине совет артиллерийĕ тăшман позицийĕсене çилтăвăллăн пеме тытăннă. Фашистла нимĕç çарĕсен укрепленийĕсем çийĕнче пирĕн бомбардировщиксемпе штурмовиксен пысăк соединенийĕсем вĕçме тытăннă, вĕсем тăшман çине темиçе пин бомба тăкнă. Артиллерипе авиаци çапла çĕмĕрнĕ хыççăн пирĕн çарсем нимĕçсен оборонин хăватлă узелĕсене штурмлама тытăннă. Пĕр соединени боецĕсем, çав тери хăвăрт пырса çапса, Мекензиевы Горы ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем нимĕçсен оборонин паха узелне Сапун-Горана туртса илнĕ. Хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшманăн Севастополь патĕнчи çирĕплетнĕ районăн тĕп тăрăхне пĕтĕм талкăшĕпех татнă. Ку тăрăхра тĕрлĕ сăртсемпе çӳллĕ вырăнсем çинче нимĕçсем тимĕрпе бетонран темĕн чухлĕ дотсемпе дзотсем туса тултарнă пулнă. Çак питĕ хăватлă оборона сооруженийĕсене темĕн чухлĕ траншейăсем, пралук картасем тата мина хирĕсем картласа хӳтĕлесе тăнă. Тăшман хăйĕн позицийĕсене сыхласа хăварма пур майсемпе те тăрăшнă. Нимĕçсем хăйсен пехотипе тата танкĕсемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупписене контратакăсене кĕрте-кĕрте янă. Пирĕн наступлени туса пыракан çарсене вĕсем хăйсен пемелли мĕнпур хатĕрĕсемпе персе тăнă. Анчах та совет çарĕсем çав тери çил-тăвăллăн пырса çапнă, тăшмана йывăр сухатусем кӳнĕ, вара гитлеровецсем хăйсен позицийĕсене пĕрин хыççăн теприне пăрахса хăварма тытăннă. Пĕр Сапун-Гора районĕнче кăна 4.000 гитлеровеца ытла вĕлерсе тăкнă, 36 дотпа 27 дзота сирпĕнтерсе янă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисен йышĕ пысăк. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, совет боецĕсем нимĕçсене çӳллĕ вырăнсемпе тĕреклетнĕ пунктсенчен нумайĕшĕнчен çапа-çапа кăларнă, вара тăшманпа Севастополе кĕмелли чи çывăх вырăнсенче çапăçма тытăннă.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман пехотин батальонĕ пĕр ялта çирĕпленсе тăнă пирĕн подразделенисене атакăланă. Ал вĕççĕн тытăçса илнĕ хыççăн нимĕçсене каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсем 300 çынна çити вилсе е аманса выртса юлнă.

* * *

Яссы хулинчен хĕвеланăçнерехре ирхине тăшман пехотипе танкĕсем атакăсем пуçарса янă. Питĕ хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Уйрăм участоксем темиçе хутчен те алăран-алла куçнă. Каç пулса килнĕ тĕлелле пирĕн чăсем нимĕçсемпе румынсен çарĕсене татăклăн пырса çапнă та малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çак çапăçура пирĕн артиллери нимĕçсен 40 танкне персе çĕмĕрнĕ е сунтарса янă. Тăшманăн çын нумай пĕтнĕ.

Пирĕн летчиксем куп каçиччен сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Финн заливĕнче пирĕн торпедăсем пăрахакан самолетсем нимĕçсен 5.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

* * *

Сурçĕр флочĕн карапĕсем тăшманăн 150 тонна таякан мотоботне шыва путарнă. Мотобот командине тыткăна илнĕ.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшне çитиччен нимĕçсен 6 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче çарсемпе вăрçă хатĕрĕсем турттарса пыракан темиçе вунă вагон çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Пĕр районра совет патриочĕсем, тăшман гарнизонне тапăнса, 60 гитлеровеца çити вĕлерсе тăкнă. Нимĕçсем асаплантарса вĕлермелле тунă совет гражданĕсен 30 çемьине партизансем ирĕке кăларнă.

* * *

Румынире Хĕрлĕ Çар йышăннă районсенче пурнăç хăй картне кĕрсе пырать. Пур ялсенче те тенĕ пекех хресченсем сурхи ака туса пĕтернĕ. Вырăнти власть органĕсем—префектурăсемпе примарисем—хăйсен ĕçне пуçăннă. Вырăнти халăх телефон çыхăнăвне майлаштарать, кĕперсемпе çулсене юсать. Чылай ялсенче вырăнти халăх Хĕрлĕ Çара нимĕçсене Румынирен хăвăртрах хăваласа кăларма чунтан-вартан пулăшма тăрăшать. Фетештий ялĕнчи хресчен Римитру Солонка çапла каланă: Нимĕçсем пире çарататчĕç. Каялла чакнă чух вĕсем пирĕн лашасемпе вăкăрсене нумай илсе кайрĕç. Хресченсем вырăс çарĕ нимĕçсене хăвăртрах çĕнтертĕр тесе сунаççĕ. Лункушсара ялĕнчи çынсем Хĕрлĕ Çарăн пĕр чаçне шыв урлă каçма пулăшнă. Румынсем хăйсемех лодкăсем илсе пынă, çав лодкăсемпе боецсене шыв урлă каçарнă. Рэдиний ялĕнче благочинный Николай Добря ĕненекенсене каланă проповедĕнче çапла каланă: вырăс çарĕсемпе союзниксен çарĕсем Германие çĕнтереççĕ, тенĕ. Вăл вырăнти халăха Хĕрлĕ Çара пулăшма чĕннĕ, çапла майпа вăрçа хăвăртрах пĕтерме пулать, тенĕ.

Вăхăтăн кашни сехечĕ хаклă. Çураки хăвăртлăхне ÿстерер, вăйлă тырпул никĕсне вăхăтра хывса хăварар!

Пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерне

ШĂХАСАН. «Красный Октябрь» колхоз членĕсем Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне тĕплĕн вĕренеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çураки приказне ĕçпе ответлеççĕ. Хĕрлĕ Çара тивĕçлине пулăшма пулăççĕ.

Колхозниксем хăйсем илнĕ обязательствăсене ăнăçлă пурнăçлаççĕ. П. Денисова, М. Павлова, П. Суркина сухаçăсем кулленех нормăна 120—135 процент тултарса ĕçлерĕç. 67 çулхи Е. Михайлов тырă акнă çĕре нормăна кашни кун 175—200 процент тултарать.

Колхоз майăн 7-мĕшĕнче пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Именовăри «Малалла» колхоз майăн 7-мĕшĕнче пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене акса пĕтерчĕ. 265 гектара план тăрăх 9 кунра акса пĕтермелле пулнă пулсан, вĕсем 8 кунра акса пĕтерчĕ.

Çуркуне ăнăçлăн ирттерес ĕçре коммунистсем колхозниксен малта пынă. Вĕсем хăйсем сумне çирĕплетсе панă бригадăсене агитаципе-массăллă ĕç ертсе пынă. А. Крылова юлташ колхозниксене Сталин юлташăн приказне ăнлантарса панă, «Красный путиловец» колхоз членĕсен чĕнĕвне сўтсе-явнă. Колхозра 3 номер отена участок, бригадăсенче боевой листоксем кăларнă.

Ăнлантарулла ĕçе кулленех туса пыни колхозниксен ĕçлес хастарлăхне ўстерне. Çапла, В. Якимова тата М. Степанова сухаçăсем кунне 1,40-шер гектар сухаланă. Çамрăк хĕрачасем А. Иванова, В. Владимирова, Е. Степанова юлташсем те кунне шĕрер гектар вырăнне 1,25-шер гектар сухаланă.

Ăмăртура коммунист Максимова юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада малта пырать.

Халĕ колхозниксем çĕрулми вырăнĕсене сухалаççĕ. Пахча-çимĕç вăрлăхĕсене лартма калчасем хатĕрлеççĕ. Махорка вăрлăхне акса пĕтерне.

Кун пек тимлĕн ĕçлекен колхозсем татах та пур. Районĕпе 8 колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене акса пĕтерне. Паян-ыранах татах 2—3 колхоз акса пĕтереççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Коммунист ертсе пыракан колхозра

КАЛИНИНО. Коммунист М. Быков юлташ председатель пулса ертсе пыракан «Искра» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне ответлесе, çурхи тырăсене пысăк пахалăхпа акса хăварассишĕн кĕрешеççĕ.

— Сталин юлташăн приказĕ — тăван çĕршыв приказĕ. Вăл пире хамăрăн малашнехи ĕçсене епле туса пымаллине çул кăтартса пырать, — терĕç вĕсем. Халĕ вĕсем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, бригадăпа бригада, колхозникпе колхозник ăмăртса ĕçлеççĕ.

Акă, Макаровпа С. Зайцев комсомолецсен бригадисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Макаров бригадинче комсомолец Б. Аполоновпа комсомолка Е. Соловьева юлташсем сеялкăпа тырă акаççĕ. Вĕсем куллен 12 ретлĕ сеялкăпа акса нормăна 175 процент ытла тултараççĕ.

Зайцев бригадинчи комсомолецсем те фронтри пекех ĕçлеççĕ. В. Зайцевăпа Рукавишников комсомолецсем сўрелеççĕ. Вĕсем те кулленхи ĕç нормисене 120-шер процента яхăн тултараççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Ферма çумĕнчи участоксенче ĕç пуçланчĕ

Пирĕн çĕршыва фронта сĕт-çу, аш-какай, промышленноçа — тир-сăран, çăм ытларах та ытларах парса тăмалла. Çак пысăк задачăна пурнăçлассишĕн районри колхозсем аван ĕçлерĕç. Эпир иртнĕ çул майракаллă шултăра выльăхсен ĕрчевлĕхĕн плана 137 процент, сысна енĕпе — 128 процент, сурăхсем енĕпе—120 процент тултартăмăр. Çак выльăхсене тăрантарса хĕл каçарма чылай колхозсем иртнĕ çул выльăх апачĕ сахал хатĕрлерĕç, чылай колхозсен выльăх апачĕ çитеймерĕ пулчĕ. Районри 9 колхозра вăл уламĕ те çитмерĕ. Тĕрĕссипе калас пулать, иртнĕ çул выльăх апачĕ енчен пирĕн пысăк йывăрлăхсем пулчĕ. Иртнĕ çулсенче чылай колхозсем нумай çул ўсекен курăксен акмалли пулна туса пĕтернĕ, вăрлăхне туса илеймен.

Иртнĕ çул чылай колхозсем ферма çумĕнчи участоксем çинче выльăх апачĕ туса илнĕ. Çак участоксенче уйрăм колхозсем пысăк тухăçлă тымарçимĕçсем туса илчĕç. Çăмахри, Калинин ячĕпе тăракан колхозра 2 гектар çине выльăх кăшманĕ акăнччĕ. Çак лаптăкран вĕсем 220 центнер ытла кăшман пухса илнĕ.

Кăçал эпир кашни ферма çумĕнче лаптăк тума шутларăмăр. Районри колхозсем Тамбов облаçĕнчи, Мичуринскри районри «Заветы Ильича» колхозри фермăсен работникĕсен чĕнĕвне сўтсе-явнă, кашни ферма çумĕнче участоксем тума шутларĕç, районĕпе пурĕ 300 гектар уйăрнă.

«Дружба» колхозра (председателĕ Григорьев юлташ) фермăсем таврашĕнчи 20 гектар çĕре акса хăвараççĕ. Çак участока фермари выльăхсене çитерме: çĕрулми, чĕкĕнтĕр, кавăн, кишĕр, вир, хĕвелçаврăнăш тата вика-сĕлĕ акаççĕ. Выльăх апачĕ акнă участоксенчи ĕçе пĕтĕмпех ферма работникĕсем тăваççĕ. Паянхи куна çак участок çине тăкма 140 центнер минераллă удобрени хатĕрленĕ, ака сухи туса пĕтерне, ун айне 300 лав тислĕк тăкнă. Ферма çумĕнчи участоксене пĕтĕмпех ĕнесемпе тата кастарнă вăкăрсемпе сухаланă. Ĕçе ферма заведующийĕ В. Т. Тимофеев юлташ ертсе пырать. Фермăра ĕçлекенсене уйрăм культурăсем сумне çирĕплетнĕ.

Кивĕ Вăрмарти «Большевик» колхозри ферма çумĕнчи участокра та ĕç лайăх пырать. Кунта выльăх апачĕ валли акма 10 гектар çĕр уйăрнă. Ферма заведующийĕ Лукин юлташ ăçта мĕн акмаллине палăртса хунă.

«Хĕрлĕ Кĕтне» колхозра та ферма çумĕнчи участок валли 10 гектар уйăрнă. Çак участок çине кишĕр, кавăн, выльăх чĕкĕнтĕрĕ, вир тата ытти çимĕçсене те акаççĕ. Халĕ кунта ака сухи тăваççĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Çак колхозра фермăри выльăхсем çўремелли вырăна иртнĕ çул ларса юлнă çумкурăксенчен, хăмăлсенчен тасатаççĕ.

Çакăн пек ĕçлеççĕ ферма çумĕнчи участоксем çинче пирĕн районри фермăсен работникĕсем. Ферма çумĕнчи кашни участокран пысăк тухăçлă выльăх апачĕ туса илессишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Т. ГРИГОРЬЕВА,
Вăрмар райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникĕ

Кок-сагыз мастерĕсем патĕнче

ШĂХАСАН. Ухманти «Победа» колхоз членĕсем кок-сагыз акма чи лайăх çĕр участокĕ уйăрнă. Унта ĕçлеме уйрăм бригада организациленĕ. Çав бригадăна ĕç хатĕрĕсем, лашасем çирĕплетсе панă. Колхозницăсене çĕнĕ культурăна лайăх пăхса çитĕнтерни фронт валли пысăк ĕç пулни çинчен ăнлантарса панă. Вĕсене тухăçлă ĕçшĕн премисем памалла тăваççĕ, тесе ăнлантарса панă.

Кок-сагыза пĕрремĕш хут 1942 çулта çуркунне, кĕрхи çĕртме тунă вырăна 8 гектар çине, акса хăварнă.

«Победа» колхозникĕсем кок-сагыз вăрлăхне акиччен 20 кун малтан стратификаци тунă.

Акиччен малтан участока питĕ лайăх сўрелесе кăпкалатнă, ун хыççăн тўрех акнă. Акана питĕ хăвăрт ирттернĕ, пĕр кун хушшинче акса пĕтернĕ.

Акнă участок çине, кашни 1 гектар пуçне 5,5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе типĕлле апат панă. Ретсем тикĕсленччĕр тата тислĕк пур вырăна та пĕр пек лектĕр тесе, йывăç сўрепе пĕр хутчен сўреленĕ. Кок-сагыз шăтма пуçласан, рет хушшисене кăпкалатнă. Кок-сагыз çитĕнсе пынăçемĕнех çумкурăкĕсене тасатнă, ун хыççăн каллех кăпкалатнă. Çапла вара пĕр çулхи кок-сагыз плантацине виçĕ хутчен çумкурăксенчен тасатнă, 4 хутчен кăпкалатнă.

Бригадăри колхозницăсем Мария Михайлова, Анна Никитина, Марфа Матвеева, Мария Кириллова, Антонина Малафеева, Нина Платонова, Александра Рябикова ырми-канми ĕçленĕ. Вĕсем кок-сагыз тымарĕ Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнине тĕплĕн ăнланнă. Тăрăшса ĕçлени сая кайман. Вĕсем иртнĕ çул тухăçлă кок-сагыз туса илнĕ. Кашни гектартан 16,2 центнер кок-сагыз тымарĕ, 0,4 центнер вăрлăх туса илнĕ.

Кок-сагыз туса илес енĕпе тăрăшса ĕçленĕшĕн Росткаучук управленийĕ бригадăна 16 пин тенкĕлĕх таварсем парса премиленĕ.

1942 çулта кĕркунне бригада татах 9 гектар çине кок-сагыз акса хăварнă. 1943 çулхи çуркунне кок-сагыз акмалли лаптăка пысăклатнă.

Кок-сагыз бригадинче пуринчен ытларах хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Бригадир пулса ĕçлеме кок-сагыз акакансен курсĕнчен вĕренсе тухнă Мария Михайлова юлташа уйăрнă. Вăл хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Кок-сагыз вăрлăхне пĕтĕмĕшпех стратификаци тунă. Планпа кăçал 6 гектар кок-сагыз акса хăвармалла. Çав çĕр лаптăкĕ çине кĕркунне 120 лав лайăх çĕрнĕ тислĕк тăкнă, пĕтĕмĕшпех кĕрхи çĕртме тунă.

Кăçал бригада икĕ çулхи кок-сагыз тымарăсене июль уйăхĕнче кăларма палăртнă. Бригадăри колхозницăсем пурте кашни гектартан 13 центнертан кая мар кок-сагыз туса илме ĕмĕтленеççĕ. Пĕтĕм ĕçе вăхăтра туса, государствăна пысăк пахалăхлă кок-сагыз тымарĕ пама тăрăшаççĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Михайлов юлташăн пархатарлă ĕçĕ

ЙĔПРЕÇ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕ Дмитрий Михайлович Михайлов 60 çулта. Вăл хăйĕн ваталăхне пăхмасăрах колхоз ĕçĕнче хастарлăн ĕçлет. Колхозăн ака çинче çитерме выльăх апачĕ çитмен, çавна кура Д. М. Михайлов юлташ колхоза 74 пăт утă панă.

Фермăсен заведующийĕ

Муркаш районĕнчи, Оринино ялĕнчи «Красное Сормово» колхоз вăйлă тырпул туса илнипе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнипе районра кăна мар, пĕтĕм республикăра чапа тухрĕ.

1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кунта ытлашшипех тултарнă: майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе — 114 процент, сыснасем енĕпе—135 процент, сурăхсен енĕпе—140 процент, кайăк-кĕшĕксем енĕпе—142 процент тултарнă.

Çамрăк выльăхсене пурне те лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Кашни пăруламалла ĕнерен пăру илнĕ, кашни 100 сурăхран 118 путек, кашни сысна аминчен 17 çăвăр илсе çитĕнтернĕ.

Кашни сăвакан ĕнерен 1.200 литр сĕт суса илес вырăнне 1.314 литр суса илнĕ. Доярка Наталья Васильева юлташ «Манька» ятлă ĕнерен 1.700 литр сĕт суса илнĕ. Пăрусем кашни кун вăтамран 650—700-шер грамм хушăнса пынă, орденоносец Ксения Григорьева пăхакан пăрусем талăкра пĕр килограмм хушăнни те пулнă. Ксения Григорьева виçĕ çул хушши пĕр улшăнмасăр пăрусем пăхать. Çак вăхăт хушшинче вăл 128 пăру çитĕнтерсе панă.

Выльăхсенчен плана пăхнинчен ытларах продукци илнĕшĕн тата çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтернĕшĕн фермăра ĕçлекенсене ĕçшĕн хушса тўленĕ. Ферма заведующийĕ С. М. Соловьев юлташ 102 литр сĕт тата 108 килограмм какай, доярка Н. Васильева юлташ 310 литр сĕт, Павлова—110 литр сĕт, К. Григорьева — 65 килограмм какай илнĕ, сысна пăхакансене 10 сысна çури панă.

Фермăри выльăхсене кунта лайăх пăхаççĕ. Вĕсем ăшă та çутă витесенче хĕл каçрĕç. Ĕнесене паракан апата вакласа, вĕри шывпа пĕçерсе е йўçĕтсе çитереççĕ. Сыснасене утă çăнăхне çĕрулми ватса хутăштарса çитереççĕ. Ĕнесене улăмпа пĕçерсе е йўçĕтсе çитериччен вĕсене талăкра 3—4 литр сĕт панă, улăма çемçетсе çитерме тытăнсан вара 2—3 хут ытларах пара пуçланă.

«Красное Сормово» колхоз иртнĕ çул выльăх фермисенчен 205.921 тенкĕ тупăш илнĕ.

— Фермăра ĕçлекенсем кăçал кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 1.400 литр сĕт, кашни сысна аминчен 15 çăвăр илме, çамрăк выльăхсене пурне те ăнăçлăн пăхса çитĕнтерме, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарма пулчĕç. Çав обязательствăна пурнăçласа фронтпа çĕршыва сĕт-çу, аш-какай, тата выльăх-чĕрлĕхĕн ытти продукчĕсене те ытларах та ытларах парассишĕн кĕрешетпĕр, — тет Соловьев юлташ.

Соловьев юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Хисеплĕ грамота парса наградăланă.

В. АКЧЕЛЬ.

Ўкерчĕк çинче: Шупашкарти табак фабрикинчи стахановка Шадчина юлташ. Вăл ĕç нормине яланах ирттерсе тултарать.

Н. ДАНИЛОВ фотоўкерчĕкĕ.

Планран ирттерсе 11.750 тенкĕлĕх продукци

ЙĔПРЕÇ. Пирĕн «Красный строитель» промартель коллективĕ апрель уйăхĕнче планран ирттерсе 11.750 тенкĕлĕх продукци кăларчĕ.

Уйрăмах куршак-чўлмек, обоз хатĕрĕсем тăвакан тата тимĕрç, атă-пушмак цехĕсен коллективĕсем лайăх ĕçлерĕç. Куршак-чўлмек тăвакан цех (бригадирĕ С. Фадеев) апрель уйăхĕнчи плана 292,8 процент, тимĕрç цехĕ (бригадирĕ И. Ташов)—138,6 процент пурнăçларĕç. Обоз хатĕрĕсем тата слесарнăй цехсем апрель уйăхĕнче 14 пин тенкĕлĕх продукци кăларса плана 774 процент тултарчĕç.

Пирĕн рабочисемпе работницăсем тата инженерно-технически работниксем апрель уйăхĕнче тунă çитĕнўсемпе лăпланса лармаççĕ, малашне татах та лайăхрах ĕçлеме пулчĕç.

Д. МИХАЙЛОВ.
«Красный строитель» промартель правлени председателĕн заместителĕ.

Пĕлў тĕрĕслевĕсем умен

Вĕренекенсене пурне те тĕрĕслеве явăçтарар

ВĂРМАР. Кив Вăрмарти çичĕ çул вĕренмелли шкул пĕлў тĕрĕслевне ирттерме план тунă. Çав планра палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртме мĕн кирлине пĕтĕмпех хатĕрлесе çитернĕ. Пĕлў тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнчи уроксен расписанийĕсене тунă, халĕ çулталăк хушшинче мĕн вĕреннине тĕрĕслеме билетсем хатĕрлетпĕр.

Вĕренекенсене пурне те тĕрĕслеве явăçтарас тесе, ачасен ашшĕ-амăшĕсене пухса калаçу ирттертĕмĕр. Вĕсене пĕлў тĕрĕслевĕн йĕркисемпе паллаштартăмăр.

Фронтовиксен ачисене эпир яланах пулăшатпăр. Вĕсене Кив Вăрмарти «Большевик» колхоз та (председателĕ Игнатьев юлташ) лайăх пулăшать. Иртнĕ çул колхоз шкула 2 гектар тулă акса пачĕ. Кăçал хăйĕн вăрлăхĕпе 1 гектар çурхи тулă акса парать, 0,4 гектар çĕрулми лартса пулăшать.

Кăçалхи вĕренў çулĕнче 101 ачапа çĕнĕ кĕпесемпе шалаварсем парса пулăшнă. Хĕллехи сивĕ кунсенче фронтовиксен ачисене 11 çĕлĕк, 13 мăшăр носки, 9 мăшăр алсă, 1.127 тенкĕ укçа панă.

Вĕренў çулĕн тăваттăмĕш чĕрĕкĕ пуçланнăранпа ачасене вĕри апат çитеретпĕр. Унта 103 ача çўрет. Столовăй валли шкул иртнĕ çулта хăй участокĕ çинче 4 центнер тулă, 12 центнер çĕрулми туса илчĕ. Кунсăр пуçне колхоз 4 центнер тулă тата 8 центнер çĕрулми парса пулăшрĕ. Пĕлў тĕрĕслевĕ вăхăтĕнче 4—7-мĕш классенче вĕренекенсем пурте вĕри апат çиеççĕ.

Пĕлў тĕрĕслевĕсене хатĕрленнипе пĕрлех эпир çĕнĕ вĕренў çулне те халех хатĕрленме тытăнтăмăр. Халĕ шкул суртне юсанă çĕрте кирлĕ япаласене илсе хатĕрленĕ. Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленсе çитеретпĕр.

А. ИЛЛАРИОНОВ,
Шкул директорĕ.

БОЛЬШЕВИКЛА ПИЧЕТ КУНĔ

Мускаври пичет работникĕсен Союзсен Çурчĕн Колоннăй залĕнче пулса иртнĕ пĕтĕм хулари пухăвĕ

Ĕнер, майăн 8-мĕшĕнче, Союзсен Çурчĕн Колоннăй залĕнче, большевикла пичет кунĕ ячĕпе, хаçат, журнал, издательство работникĕсен тата рабкорсен пĕтĕм Мускаври пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура фронтра тухса тăракан хаçатсен работникĕсем те йышлăн пулнă. Вĕсенчен нумайĕшне фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешўре паттăр та хăюллă çапăçнăшăн орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Совет пичечĕн черетри задачисем çинчен ЦК ВКП(б) пропагандăпа агитаци управленийĕн начальникĕ Г. Ф. Александров юлташ доклад туса панă.

Пичет работникĕсен пĕтĕм хулари пухăвĕнче пулнă çынсем çав тери хавасланса Сталин юлташа яма саламлă çыру йышăннă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Совет çарĕсем Чехословаки территорине кĕрсе кайсан Совет Главнокомандующийĕпе Чехословаки Администрацийĕ хушшинче çыхăнусем мĕнле пулмалли çинчен Совет Союзĕпе Чехословаки тунă килĕшĕве ал пуснă пирки ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Чехословаки правительствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ вырăнне ĕçлекен Губерт Рипка Совет Союзĕпе Чехословаки тунă килĕшў пирки паян çапла каланă:

Хĕрлĕ Çар хăйĕн юлашки татăклă наступленине хатĕрленсе çитет. Чахсен хăйсен тăван çĕршывĕ умĕнчи тата хăйсен союзникĕсем умĕнчи тивĕçе чыслăн туса пымалла, вырăс çарĕсене пур майпа та вăйлă пулăшмалла. Совет правительстви çак килĕшĕве алă пуснă чухне чехсен ыйтăвĕсемпе вĕсен законĕсене кăмăл туса хисепленĕшĕн Рипка тулли кăмăлпа чунтан-вартан тав туни çинчен каланă.

Чехословаки республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Массарик (вăл халь Филадельфире) çапла каланă: çак вăрçă пĕтиччченех Германин кунçулĕ союзниксен çарĕсен командующийĕсен — Эйзенхауэрпа Монтгомери генералсен тата вĕсен питĕ чаплă вырăс союзникĕн аллинче тăмалла. Çак вăрçă çĕнĕрен кирек мĕнле агресси тухассине пуçĕпех пĕтерсе лартмалла, тенĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНПА БРАУНШВЕЙГА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине «Сандерболт» йышши самолетсем Лилль тата Эвре патĕнчи аэродромсене, Аррас районĕнчи сортировка станцийĕ çине тата Сена шывĕ çинчи Руан сывăхĕнчи чугун çул кĕперĕ çине пикировка туса бомбăсем пăрахнă.

Майăн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиацийĕн питĕ йышлă вăйĕсем тăшманăн Рейнри аэродромĕпе боеприпас склачĕ çине, Нантрипе Турги аэродромĕсем çине, Сальбрири боеприпас склачĕ çине тата Нормандии çыранĕнчи вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Атакăсем питĕ хăватлă пулнă.

Германире Леверкузен хули çине бомбăсем пăрахнă.

Фриз утравĕсем патĕнче акăлчансен çыранри авиацийĕ тăшманăн 5 суту-илў суднине сиенленĕ тата çав суднăсене хураллакан пыракан карапĕсене нумайĕшне сиенленĕ.

ЛОНДОН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, американецсен йывăр бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем майăн 8-мĕшĕнче кăнтăрла Берлинпа Брауншвейг районĕнчи объектсене тапăннă. Çак операцире пĕр пине яхăн бомбардировщик тата çавăн чухлех истребительсем пулнă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНПА БРАУНШВЕЙГА ТАПĂННĂ ЧУХНЕ НИМĔÇСЕН АВИАЦИЙĔНЧЕ ПУЛНĂ ÇУХАТУСЕМ

ЛОНДОН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян Америка бомбардировщикĕсем Берлинпа Брауншвейга тапăннă чухне нимĕçсен 119 самолетне персе ўкернĕ, американецсен 49 самолет пĕтнĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, фронтра нумай пунктсенче артиллери вăйлăн пеме тытăннă.

Ĕнер Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Балградпа Панчево хушшинчи чугун çул çинчи тăшман кĕперне тапăннă. Çав кунах союзниксен авиацийĕ Бухарестри тĕп сортировка станцийĕ çине бомбăсем чылай пăрахнă. Бомбăсем ўкнĕ тĕлте пушарсем тухнă, взрывсем пулнă.

Иртнĕ çĕр союзниксен бомбардировщикĕсем каллех Бухарестри промышленность объекчĕсене тапăннă.

Ытти соединенисем çаплах тăшманăн Италири вăрçă объекчĕсем çине тата Югослави çыранĕсем патĕнчи карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 29 самолетне персе ўкернĕ.

КĔСКЕН

▲ Берлин çине бомбăсем пăрахнине пула гестапо çуртĕ пăртак ишĕлнĕ.

▲ Майăн 8-мĕшĕнче ирхине Англин тинĕс-çар флочĕ нимĕçсен «Эльбинг» йышши эсминецне шыва путарнă.

▲ Март уйăхĕнче Японин пĕрлешўллĕ флочĕн главнокомандующийĕ Кога адмирал пĕтнĕ.

▲ Пьемонтра партизансемпе фашистсен отрячĕсем тытăçа-тытăçа илнĕ. Веронăра партизансем пĕр поезда чарнă. Ку поезд çинче Германие ĕçлеме мобилизацилесе янă Итали рабочийĕсем пулнă. Партизансем çав рабочисене пурне те ирĕке кăларнă.

▲ Бельгире оккупантсене хирĕç пыракан вăрттăн кĕрешўре сахалтан та 100.000 çын хутшăнса ĕçлет. Нимĕçсем валли ĕçлекен предприятисенче саботажпа диверсисем тăваси вăйланса кайнă. Нумаях пулмасть, гранатăсем тăвакан заводра рабочисем туса хатĕрленĕ продукцие тĕрĕслекен аппаратсене пăснă. Çавна асăрхамасăр, гитлеровецсем лайăх гранатăсене юрăхсăр тесе йышăнман, юрăхсăр гранатăсене йышăннă.

Бельгире 200 патриотла хаçата ярăн вăрттăн кăларса тăраççĕ.

▲ Египетра Российăри гражданла халăха пулăшу парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлеме комитет тунă. Комитета король Фарук пулăшса тăрать. (ТАСС).

США-ПА ШВЕЙЦАРИ ГЕРМАНИЕ ШВЕЙЦАРИРЕН ТАВАРСЕМ САХАЛТАРАХ ЯРАССИ ÇИНЧЕН КАЛАÇНИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Лондонра Америкăпа Швейцари представителĕсем Швейцарин Германие паракан кредичĕсене чакарасси çинчен тата Германие шарикоподшипниксем, хронометрсем тата виçмелли ытти приборсем сахалтарах ярса тăрасси çинчен ăнăçлăн калаçаççĕ. Çакăн вырăнне Швейцари представителĕсем Швейцарие США-ран апат-çимĕç, çĕрмамăкĕ тата тринитротоуол ытларах яртарасшăн. Çапла шухăшлаççĕ: çак калаçусем хыççăн суту-илў договорĕ тăвĕç, çав договор пĕлтĕрхи декабрьте тунă вăхăтлăх килĕшў вырăнне пулса тăрĕ, теççĕ.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Швейцари США-ра илекен таварсене малтан Португалие яраççĕ, унтан вĕсене Францие турттарса каяççĕ, унтан вара чугун çулпа Швейцарие илсе пыраççĕ.

«НЬЮ ДАГ» ХАÇАТ ФИНЛЯНДИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью даг» хаçатăн Хельсинкири корреспонденчĕ çапла çырать: аслă вырăнта ĕçлекен хăшпĕр çынсем 1940 çулта Финляндие американецсемпе скандинавсем янă çав тери нумай укçапа пуйса кайнă. Анчах рабочисемпе вĕсен арăмĕсем çĕтĕк-çатăк тăхăнса çўреççĕ. Хальхи Финляндире снабжени министерствинче таможньăра с полицире ĕçлекенсен пĕрин те выçă пурăнма тивмест. Взяткăсем, çынсене укçа парса çавăрасси ытла та сарăлнă, вĕсем ĕнтĕ яланхи ĕç пек шутланса тăраççĕ. Аслă вырăнта ĕçлекен чиновниксем Германири нацистсен пуçлăхĕсем пекех пуйса кайнă.

Финляндире рабочисемпе вак хресченсене çеç пурăнма йывăр. Финн хĕрарăмĕсен фабрикăсемпе ялхуçалăхĕнче йывăр ĕçсем тума тивет. Апат начар пулни, санитари условийĕсем сывлăхшăн сиенлĕ пулни тата ĕç йывăр пулни финн рабочийĕсен хĕрарăмĕсене начарлатпă. Çаксем пирки туберкулезпа чирлесси ўснĕ. Намăс чирĕсем нумай сарăлнă. Нерв чирĕпе чирлекенсен йышĕ ялан ўссе пырать. Хăйсене хăйсем персе вĕлерекенсем те чылай.

БЭРКЛИ ФИНЛЯНДИЕ РАДИОПА ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). США сенатĕнчи демократсен лидерĕ Бэркли США-н вăрçă информаци бюровĕ Финлянди валли панă радиопередачăра çапла каланă: финсен «Финляндин вăрçа пăрахмалли татăклă вăхăт çитсе килни çинчен хăйсен правительствине ăнлантарса памалла», тенĕ. Бэркли çапла каланă: Совет Союзĕн перемири условийĕсене сирсе яни финн халăхĕн тĕп интересĕсене хирĕç пырать, тенĕ.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăваканĕ П. Н. НИКОЛАЕВ.

Промысла кооперации артелĕсенче çитес вăхăтра отчетпа суйлав пухăвĕсем пулмалла. Çавăнпа Промстрахкасса хăйĕн системинчи промартельсене майăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр артельпе Промстрахкасса 1944 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне пĕр-пĕрне мĕн чухлĕ укçа памалла пулнине тĕрĕслеме хушать. Çав срок иртсен нимĕнле претензисене те йышăнмасть.

ПРОМСТРАХКАССА.

Хусанта сельхозбанк работникĕсене хатĕрлекен тата вĕсен квалификацине ўстерекен курс уçăлать. Çав курса вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисенчен кая пĕлмен çынсене е практикăллă ĕçре чылай ĕçленисене илеççĕ. Заявленисене майăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр çак адреспа ямалла. Гор' Чебоксары, Чувашская Контора сельхозбанка.

2—1

Чăвашпотребсоюзăн хатĕрлев управленине районсенче кайăк-кĕшĕкпе çăмарта комбиначĕсенче ĕçлеме старши бухгалтерсем кирлĕ. Хватер параççĕ. Комбинатсенче столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор Чебоксары, ул. Театральная, 1/5, Управление заготовок Чувашпотребсоюза.

2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00639 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.